26 11

ШАЛАНКӐ

Ш-20

# ИРХИ СЫВЛӐМ

ЦЕНТРАЛЬНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО НАРОДОВ СССР

ШАЛАНКА

# УТРЕННЯЯ РОСА

(СБОРНИК СТИХОВ)

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ.

ЦЕНТРАЛЬНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО НАРОДОВ СОЮЗА С. С. Р.
Москва, Никольская, 10.

Пӗтӗм тӗнҫери пролеттарисем, пӗрлешӗр!

## ШАЛАНКĂ

# ИРХИ СЫВЛĂМ

## (ИЛЕМЛӖ САВĂСЕМ)

„Шалин-шалин шаланкă
Сывлăм шывӗшӗн макăрать“
(Ҫăваш йуррин҆ҫен).

ЦЕНТРАЛЬНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО НАРОДОВ СОЮЗА ССР.
МОСКВА—1926

Книга набрана и отпечатана на книжной фабрике Центрального Издательства Народов СССР. Москва, Шлюзовая набережная, д. № 162, в количестве 3.000 экземп.

Главлит № 56.438.

## Сăвăç (поет).

„Кăвак хуппи“*) уçăлҫĕ,
— Вăран! тенĕн туйăнҫĕ,
Еп карт сиксе тăрайрăм,
„Тăван çыру“ тейейрĕм.

Çирĕп вĕркĕç ман çумра,
Ҫĕртĕп, хĕртĕп вуҫаха—
Сĕн вăй кўрĕп ҫунăма.
Çапăп, туптăп ĕмĕте,
Хурçă хывăп ҫĕлхеме—
Илемлетĕп сассăма.
— Вĕркĕç, шăхăр!—йапратас,
Кĕвĕленĕ çаннă сас—
Хĕлхемленĕ сассăм ман.
Пурнăç çулĕ тикĕс мар,
Çулăм, çиçĕм вăйсăр мар—
Хыпĕ илĕ еп хушсан.
Шуçăм килҫĕ турaлса,
Вăхăт иртĕ хыт шăвса—
Вĕркĕç хатĕр, вăй пухам.
Кăнтăр шăрăх хаҫ тăраŷ,
Хаклă пирĕншĕн пĕр самант,
— Сыв пул, ыйăх, тытăнам!..

---

*) Револютси.

— Сассӑм, санӑн сарӑлса,
Пурнӑҫ урлӑ карӑнса,
Ӗмӗт умӗн пымалла.
Вӗркӗҫ кӳнӗ вӑйпала
Йӗрсӗр-мӗнсӗр вырӑнта
Ҫул пӑркӑҫӗ тытмалла.
— Сассӑм, сарӑл таврана,
Кӗвелен ӗнт ҫӗн вӑйпа—
Шӑрӑм тартӑр умӑнтан.
Сӑтӑр курнӑ халӑха
Тӗмсӗлтермӗн, йӑпатса,
Вӗҫ ӗнт, сассӑм, вӗҫ! Йусан!
— Кӗввӗм, сирпӗн таврана!
Вӗҫ ес, виҫкӗн тӑвӑлла—
Ҫиҫӗм ҫиҫтӗр кирек ӑҫтан.
Тӗттӗм, хӗсмӗт ӗҫ ҫури—
Ҫӗмсӗрленнӗ мул кулли*)
Сиктӗр, тӑтӑр ыйхӑран!..
Вӑйлӑ кӗввӗн хӗмӗпе,
Хытнӑ, путнӑ ҫӗрине
Ҫӳҫентертӗр вӑл тӑрса.
Пурнӑҫ ҫулӗн кӑлтӑкне—
Мурлӑ, урнӑ тӑшманне
Вӑркӑнтартӑр ушаха**).
1921 ҫ.
Вӑрнар, утӑ уйӑхӗ.

---

*) Ӗҫлекен халӑх; ӗҫлекенсемпе хресҫенсем.
**) Ушах тесе лаҫакана калаҫҫӗ.

# Ҫăваш аҫине.

Кăварлă ҫĕрӳ сан сисĕ ҫĕннине,
Епĕ шанатăп,
Ĕмĕте усратăп—
Ес килĕн, килĕн тĕнҫене!

(Çеçпĕл Мишши)

Ҫăваш аҫи! Кил кунта,
Илемлетер сассуна:
Çĕнĕ кĕвве кил-çуртна
Кĕртех, тейер пурнăçа.
Тăван ҫăваш куççулне
Сăвă çине тумлатар;
Тĕнҫе умне ун ҫунне
Илсе тухса тăратар.
Таптанă, пуснă пулин те
Хаҫҫҫен усрарĕ вăл хăйне;
Авал кунçул курнине
Çавах усрарĕ ҫĕринҫе.
Пайан кун та ĕç айне
Хастарлансах вăл кĕрет;
Вĕри йунпа вăй тарне
Хĕртсех пыраĭ,—çĕнетет.
Вак халăха çул пама
Сехет çапаĭ, инçе мар,
Тенĕ сасса тăнласа
Вăл ыйхăрах выртаймарĕ.
Ҫун-хавалне хăйĕнне,
Авал пухса хунине,
Кĕвве туртса йан! йарса,
Ĕçеваскарĕ çĕн вăйпа.

Ҫăваш аҫи! тăр ҫасрах!
Сехет ҫитет пире те,
Тăван кĕвве пайанах
Туртса йарар ҫĕнетсе...
　　Пире кĕтеҫ,—ҫасрах! теҫ,
　　Тăхтас марах май пур ҫух;
　　Ҫĕре ҫăвсем ирĕлеҫ—
　　Ҫасрах сасна пама тух!
Тăван ҫуна сыватма,
Сăвă тупса лăм*) парар,
Пурăнăҫа йусама
Ҫул шырама вăй парар!

(Ураскилт, 1921 ҫ. Ҫĕртме у.)

*) Лăм—нӳрĕк, сывлăм.

# Шкул аҫисен пурнăҫĕ.

Вăрнар шкулĕнҫе
Вăхăт пур ҫухне
Ҫамрăк курссантсем
Пухăнкалаҫҫĕҫ.
Пĕр пĕрнпеле
Ҫĕлхисемпеле
Пултаракансем
Йумахланаҫҫĕҫ.
Каҫса-кайаҫҫен,
Варĕ хытаҫҫен,
Кулаканнисем
Ахăлтатаҫҫĕҫ.
Вăхăт иртнине,
Ĕҫсем йулнине
Вĕсен пуҫĕсем
Асăрхамасҫĕҫ.
Кивĕ тĕнҫепе
Пуласси ҫинҫен
Вĕренессине
Ҫапах манмасҫĕҫ.
Килти ҫемйине—
Ҫăваш халăхне
Вĕрентессине
Асра тытаҫҫĕҫ.
Тата каҫхине,
Тĕттĕмрех ҫухне
Вăрман хĕрринҫе
Ахăркалаҫҫĕҫ.
Унта та кунта
Выҫҫас шутпала,
Пĕр-пĕрин тăрăх
Тапаланаҫҫĕҫ.

Ђукунçул çине,
Кăшкăртнă ђухне,
Пуйăса хирĕç
Ђупса тухаӳђĕç.

Çамрăк ђĕлхине
Ăслăлăх çинђен
Калаçса тăма
Ирĕк параӳђĕç.

Хăшĕсем тата
Ђассавайпала
Ђунтан тăрăшса
Аппаланаӳђĕç.

Тĕнĕн никĕсне
Ирсĕр ĕçсене
Пĕтерес, тесе
Шухăш тытаӳђĕç.

Тата çавăнтах
Выђђас шутпала
Вĕсем пĕр пĕрне
Ђышкă параӳђĕç.

Лешсем, ахаљ мар,
Туйантарман мар,
Пит те аванах
Хыпаланаӳђĕç.

Хăшĕ хĕрсемпе
Ђунĕ ыйтнипе
Ђунтан вартанах
Калаçкалаӳђĕç.

Сăмахĕсене
Кăмăллисене,
Кирлĕ хушăра,
Çапса пыраӳђĕç.

Кас̧хи сывлăша,
Унта та кунта,
Ăшă ыйхинҫен
Вăраткалаҫҫĕс̧.

Сăвă каласа
Сĕм вăрманалла
Ус̧ă сассене
Инс̧е йараҫҫĕс̧.

* * *

Вăнарти паха илемлĕ кĕтесре
Ратиоланҫĕ ҫĕрем хĕлĕхĕ;
С̧ĕнелнĕ сассен—с̧ĕн хумсен сассине
Пус̧тарса хуҫĕ ҫĕрем хĕвĕме.

Вăрманĕ хуллен хашласа сывлаҫ
С̧иле сиссен с̧ес̧ с̧ӳс̧енсе йурлаҫ.
Лăпкă кĕтесре пурнăс̧ сĕтекĕ
Пăт-пăт! пăт! тумлаҫ илем ҫĕресне.

Йаштака хырсем пĕт-пĕтĕм сиксех
Шăрантарас̧с̧ĕ хăйсен кĕввине;
Шап-шур хурăнсем хĕр-упрас̧ пекех
Выҫҫантарас̧с̧ĕ пӳне, пит-кус̧не.

С̧ав илем с̧инех с̧ав вăрман хĕрне
Вĕс̧нĕс̧ем вĕс̧ĕс̧ ратио хумĕсем
Ес̧ ҫĕри тапни, мăрйесен сасси...
Тулса ситтĕрĕ прийомнĕк-ҫĕрем.

Пĕрйенҫе ҫăваш, авалăх, кус̧ с̧уҫ—
Кивĕ йал, мăшкăл, ватă акапус̧
Ку йенҫе—саванăс̧, пуласси, с̧ĕнĕ йал.
Трактăрласшăн ăна с̧ĕн хула.

Ҫăтаймăрăм еп, ҫăтма пулмарĕ—
Вĕс̧ерейсе йатăм ҫĕре хĕлĕхне.
Хĕлĕхĕм йанраҫ, хам еп йурлатăп.
Хапрăк те, йалĕ те... пурте—
—Пурте туртăнас̧с̧ĕ кĕввĕмĕ.

## Тимрĕç лаççинҗе.

Çитсенех куран—
Вуҗах йалкăшаӳ;
Тимĕрне хуран—
Вуҗĕ йалт! тăваӳ.
Мукалса çитнĕ
Суха тимĕрри,
Сунтала силлет
Вăйпала çапни!
Ватăлса çитнĕ
Суккăр тимĕрççи—
Çапах та тĕллет—
Тупаӳ ун алли.
Тимĕрне çапаӳ,
Вуҗĕ йăлт! тăваӳ,
Шĕвĕртет параӳ,
Ĕçĕ җас пулаӳ.
Җуптусах йăтаӳ
Сухаç хăй хĕçне—
Җунтан тав тăваӳ
Ватă тимĕрçне.
Тимĕрççи йулаӳ
Ним сăмахсăрах,
Теприне туптӑӳ
Ыйттармасăрах.
Аллине çĕклет,
Йунĕ выҗҗанаӳ;
Лаççипе вĕçет—
Хĕлхем йалкăшаӳ.
Çӳçенсе лараӳ—
Вĕркĕç шăхăраӳ;
Çынсене кураӳ,
Лаçça йыхăраӳ.

Халăхĕ пырать,
Ĕçĕ тупăнать;
Тимĕрçси шаккать—
Пурне ыр тăвать.

——

1920-м. çул.

## Ĕç ĕмĕте.

— Ĕмĕт! ăçта ес вĕçен!
Хăçан сана еп çитем?
Тăхта*) кăштах, ан васка,—
Куратăн—епĕ хыçалта...

Ĕмĕт, темле шевлелле
Хирсем тăрăх ан тар-ха!
Ҫĕрем çунать, нÿретсе
Ҫуна сывлăм парам-ха.

Ех, ĕмĕтĕм, ĕмĕтĕм,
Итлех ĕнтĕ, ан васка!
Епĕ урăх йĕрмĕттĕм—
Вăй пар мана хаҫ утма.

Сана çитес тенипе,
Тута-çăвар çунса карĕ;
Таса ҫĕре ыйтнипе
Сирсе ывăтма çăмăл мар.

Ҫунтан вартан, кăмăлтан,
Мĕн пур сасса кăларса,
Сана епĕ йăлăнап—
—„Тăхта“, тесе кăшкăрап.

---

*) Тăхта—кĕтсе тăр.

Ех, ĕметĕм, ҫун пахи,
Есĕ итлĕн, шанатăп.
Пĕтĕм ӑмăм—пуласси—
Санра тăрать, куратăп.

Паха, таса ирĕклĕх
Ҫасрах мана парăнса
Сасне патăр:—„Йĕркелĕх
Манра", тетĕр кăмăлпа.

Ҫитеп сана, ҫитеп еп,
Ĕнтĕ есĕ инҫех мар;
Ăна кура вăй илеп—
Ĕмĕт, есĕ есрел мар.

Ех, ĕмĕтĕм—ҫун туйи
Сана ырлап—пахалап;
Пурнăҫ ҫулне ес пурри
Илемлетет, еп туйап.

Кăштах тăхта!.. еп санпа,
Тӳрлетер-ха пурнăҫа,
Пӳрех ĕнтĕ ес мана
Ирĕклĕхпе сывалма.

Вăрнар, 1921 ҫ.

# Епĕ.

(Вырăс кĕввипе)

Епĕ тăрăшрăм—
Тем те пĕр куртăм;
Çавăншăн çырма—
Кăмăллă мана.

* *
*

Атте-аннерен
Çамрăклах йултăм,
Килти çемйене
Пăрахса тухрăм.

* *
*

Манăн шухăшăм
Халĕ инçетре;
Лăплантăр ђунăм
Çак çырас ĕçре.

* *
*

Кулни—мăшклани—
Мана ним те мар;
Ырласа тăкни—
Мĕне? — кирлĕ мар.

* *
*

Умри çулпала
Хастар утатăп;
Пĕрсĕр шухăша
Манса пыратăп.

* *
*

Тӳсме çуралнă—
Тӳсен—йывăр мар;
Тарпа хуралнă
Ђăваш çемçе мар.

1920 ç. Вăрнар.

# Савнине.

(Тӑван кӗвве)

Тӑлӑх туратах
　　Тиркес, темерӗн,
Мана ҫамрӑклах
　　Савса пиллерӗн.
Ес пулман пулсан—
　　Йӗрсе вилмелле,
Пурнӑҫри тусан
　　Мана витмелле.
Сана туйрӑм та—
　　Савӑнса ӳкрӗм:
Паха йуррӑна
　　Тавҫӑрса илтӗм.
Кунҫул пусмӑрӗ
　　Мана пуссаҫҫӗ;
Мӑшкӑл мухмӑрӗ
　　Шӑлтах хуплаҫҫӗ.
Ҫӗн хӗвел тухни—
　　Мана ҫӗклерӗ;
Ес пурне туйни
　　Ҫуна ҫӗнетрӗ,—
Сана куртӑм та,
　　Йуратса хутӑм.
Сасна туйрӑм та,
　　Йурлама тухрӑм.
Хура куҫҫуҫпе
　　Куҫа хуратрӑм;
Тупа-ту, тєсе
　　Ҫуна сыватрӑм.
Ӑҫтан сан ҫине
　　Мурла еп пӑхӑп;
Тӑван сассене
　　Хурласа такӑп?..

Ђуна сыватма
    Савран лӑм илтĕм;
Хуйха пусарма
    Сан умна ӳкрĕм.
Мана ç̆ĕклеме
    Есĕ хатĕр тӑр;
Сасса ç̆ĕнетме—
    Ђасрах май пултӑр.
Сана пула еп
    Ç̆ӳç̆енсе илеп;
Ђĕрем сĕтекне
    Ђĕлхеме кӳреп.
Итле, ан пытан—
    Йалан манпа пул;
    Тинех ан вӑтан,
    Ташла, выђђа, кул!
    Сисен, еп санпа,
    Сана ырлатӑп;
    Мĕн пур пек сасса
    Сана паратӑп.
    Ес те ман ç̆ине
    Йӑваш куç̆пах пӑх;
    Тĕнђе пахине
    Ђӑвашшӑн та пух.
Ђунтан еп сана
    Савса суйларӑм,
Йулхав пек пулма
    Шут та тытмарӑм.
Тĕнђе тӳнеђђен
    Ес те йуратӑн;
Илем кӳресрен
    Пĕртте хӑрамӑн.

1921 ç̆ул, Вӑрнар.

# Тусăм, ан йĕр...

(йурă).

Тусăм, ан йĕр,—ан куҫҫан,
Кама унпа хур тăван?

Хушса йурлам. Ĕмĕте ĕнепме ан пăрах!*)

Ҫăнах, ҫуну пит йăваш—
Ҫапах ҫăтах, ан аташ.
Епĕр иккĕн пĕрре мар
Куҫҫуҫ тăкса утрăмăр.
Урăх йĕрме кирлĕ мар—
Ҫуна хытма хушăпăр.
Пирĕн ĕмĕт ҫул шыраĕ;
Ҫавна курах йĕрес мар.
Йĕрсен ҫĕре касăлаĕ—
Куҫҫуҫ куҫра ырлăх мар.
Хуйхă-суйхă кăшланă
Куҫа курсан, пит шеллĕн:
Пурнăҫ кулнă—мăшклана,
Манра ҫын сăҫ ҫук, тейĕн.
Асту, тусăм, ан йĕрех,
Ҫирĕп тăрас пулаĕ-ҫке.
Куҫҫуҫ тăкса ҫӳресех
Пурнăҫ кăмăл кӳмĕ-ҫке.
Пирĕн пурне пулăшма—
Вĕҫсе тухса каймалла.
Хĕсĕк ирсĕр пурнăҫа
Кĕрешӳпе ҫумалла.

1921 ҫул.

---

*) Йурланă ҫухне ку сăмахсене кашни икĕ ĕрет хыҫҫăн йурламалла.

Н. В.

# Шăхранпала Шупашкар *)

Сăвăç ђёлхи-кăвараЎ,
Тĕнђе çинђе шăранаЎ,
Ђунсăрри те хастарăн
Унăн ђунне сас парăт.

Йăл-йал! тăван вутçутти
Раççей çинђе выђђанаЎ;
Нуша курса пурăнни
Ђĕресене хускатаЎ.
Ĕçђен сасси хастарăн
Йанăратрĕ таврана;
Атăл ађин—Ђăвашăн
Вăй сăрхăнђĕ куç уçма.
Именессе пăрахса,
Вăл, мăшкăла таптаса,
Тухса утрĕ çулпала,
Йусасах, тет пурнăçа.
Ђун хавађпе сас пани
Унăн ахалех çухалмарĕ,
Çĕнелекен самани
Унтан тарса пытанмарĕ.
— Вак халăха çул уçма
Ђарас мар, терĕ ырă сас,
Çакна илтсен малалла
Васкамасăр кам ђăтас?
Çак сассене тăнласа,
Пурте вĕçрĕç малалла;
Пурăнăçа ырласа,
Туртрĕç йађĕç çĕн йурра!..

---

*) Шăхрана „Канаш“ тесе йат парсапах çырнă.

Пуранăç çулне ырлама
Сăмах тупма кирлĕ мар:—
Йĕплĕ хулă умăнта—
Унтан иртме çăмăл мар.
Çавăнпа та, таврана
Ђун хавалĕ йанратса
Ђĕтретмелле, ђĕнмелле—
Пурте ăна илтмелле...
Ыйха ўкнĕ хуласем
Картах! турĕç вăл саспа.
Вĕсен ўт-тир, тымарсем
Ђасах тулђĕç йунпала.
Вăл сас вăй пађĕ тымара
Ђуна çитсе лăм пама,
Çитсе систерђĕ вăл ăна
Ђĕмсĕрленме пăрахма.
Ђĕре çуне шăратса,
Вăйне кăларђĕ çĕн хула,
Çур-çĕр йенне çавrăнса
Пуçласа йађĕ йумаха...

## Шăхран:

Атăл шывĕ хĕрĕнђе
Ђăвашсенĕн тĕп хули—
Ес, Шупашкар, ларатăн,
Атăл çине пăхатăн.
Çу-каçипех хăнасем
Килсе кайаĕ сан патна,
Вутлă кимĕ-луткасем
Çиçсе пыраĕ сан умна.
Çĕнĕ хĕрлĕ йалавсем
Варкăшаççĕ пур çĕрте,
Инçетренех хăнусем
Пăхаççĕ вĕсем çинелле.

Ĕсĕ кăђăк турттатăн,
Килĕр, тесе калатăн;
Анђах, мана манатăн,—
Çаврăнса та пăхмастăн.
Кăнтăр йенђен унталла
Еп йаланах пăхатăп,
Санпа ђасрах тусланма
Шухăшласа тăратăп,
Пĕрне-пĕри ал пама,
Вăхăт ĕнтĕ, туйатăп.
Паллах, ђăваш халăхĕ
Ăна кĕтсе ывăнĕ...

## Шупашкар.

Шăхран, манпа ес паллаш,
Халĕ йату сан „К а н а ш“
Еп те йалан пăхатăп,
Хăталанма шутлатăп.
Санăн йуну хаљ вĕрет,
Вăй-хăвата ўстерет.
Хуллен-хуллен çĕкленсе
Ђăваш йатне çĕнетет.
Кунĕн-çĕрĕн сан витĕр,
Вĕçсе иртес пуйăссем;
Ик-виç çухрăм йал çийĕн
Йан-йан! кайаç сассисем.
Ăш кăмăлпа ун çине
Ĕсĕ, Канаш, пăхатăн;
Иртен çўрен кăмăљне
Пусарайса йаратăн.
Ман патăмра „хăнасем“
Çулла кăна çўреççĕ,
Акă санăн ађусем
Йалан кĕтсе илеççĕ.

Мускав,-Хусан хушшинҫе—
Есӗ мар-и ҫи вӑйли.—
Ҫукун ҫула ик йенне
Йӳнеҫтерсе йараканни?..
Нимрен хакли—саппала
Ман сӑмахсем ак ҫаксем:
Иксӗмӗрӗн хушӑра
Кӗпер хывса хумалла,
Кӗпер тӑрӑх хӑнана
Хире хирӗҫ пӗр-пӗрне
Ҫӗнсе пырса тӑмалла.
Сан шухӑшу йепплелле?..
Кунта ҫӗр-ҫун, вӑй-хӑват
Ҫавна куллен шухӑшлаҫ;
Тӑван ҫӑваш халӑхне
Кӑтартас, тет ӗҫ вӑйне.
Ҫак шухӑшсем ӑшӑмран
Ҫасах тухса ҫухалмӗҫ;
Никам ун пек ырлӑхран
Таҫта тарма шутламӗ.
Ӗҫӗн мухтав йуррине
Ун ҫух, паллах, туртасси—
Халҫхи вӑрӑм ҫул ҫине
Инҫех пулмӗ тухасси...

## Шӑхран:

Еп те, ӗнтӗ, ҫаплах, теп,
Ӗмӗтӗме ҫӗнетеп;
Ҫасрах пултӑр вӑл кӗпер,
Алӑ парса, ал илер!..

Атӑл ҫинҫе.
1920 ҫул.

# Ҫӗнӗ хумсем. (Сыпӑк)

Вӑш—ш!вӑш-вӑш! вӑ—ӑш!..
У—у—ух! Иш...—иш-иш-иш!
        Вӑщӑлтатаҫ, ӳллет,
        Хашлатса илет,
        Тапхӑр—тапхӑрӑн
        Тӑр-тӑр-тӑр-р-р! кӗрлет,
        Те савӑнаҫ тинӗс?
        Те йӗрет?..
— Вӑшӑлл... вӑш! вӑш-вӑш-ш!..
У—ух! иш!.. иш-иш-ш!
        Ӑх! ӑшшӑнши, сиввӗн-ши?
        Кӑвакӑн—симӗсӗн
        Хум ҫине хум...
        Анлӑшӗ-вӗҫӗ,
        Пурши-ха унӑн?..
        Пӗр-пӗрин ҫине ҫитсе уртӑнса
Йухаҫҫӗ хумсем таҫталла васкаса.
Вӑш-ш...—вӑш—вӑш-ш!
                Иш—ш... иш-ш!

---

Тӑшман штапӗ мар вӑл—
        Хумсем шавлани,
Ҫӑвашшӑн та йут мар хаҫ—
        Классем тавлашни...
Ленинти шухӑш—
        Ӗҫпе паллашни—
Вӑл—пурнӑҫ, вӑл—тинӗс...
        Пӑлхаршӑн—ҫӑвашшӑн
        Ҫӗн пурнӑҫ, ҫӗн шухӑш!
        Ҫав тинӗс—кӗрешӳ...
Вӑ—шӑл-л-л! вӑш-вӑш-вӑш!..
Сыв пул, ӗҫ—пӗрлешӳ!..
                Мускав.

# Тинĕсе.

(Кимĕç йурри).

Куллу аван, тинĕс сан—
Мана йалан йăпатан.
Анҫăх хăш ҫух аташан—
Ытлашшипех тукалан.
Теме хытах çилленсе
Йатлаçăва ес кайан;
Пирĕн çине çĕкленсе
Вăйна пухма тытăнан...
Çапах, çапла пулсан та,
Сана йалан йуратап;
Сана ҫунтан мухтаса,
Савса йурра пуçăрăнап.
Хумсем айне пуласса
Манса кайса, кулленех
Сан кун-çулна еп ырлап—
Аҫашланса çех ырап.
Ес хастарлăн шавлани
Киҫемлĕхе çухатат;
Хумсем хăвса кăларни—
Пире ҫӳхет—выҫҫатат.
Илемлĕхе хумсемпе
Вĕçтерсе çех çӳретĕн;
Пирĕн ҫĕлхе кĕввине
Хăна парне кӳретĕн.
Шавлах есĕ, ан ҫарăн—
Пире кунçул ес парăн;
Кулах, йанрат таврана
Аҫа, шавлах, хыт шавла!..

———

1921 ç. Шупашкар.

# Атӑл ҫинҫе.

Ҫӑвашсенӗн тӗп хули,
Сыв пул ӗнтӗ, шӑватпӑр.
Атӑл шывӗ ыр тӑвӗ
Ҫун савӑнаҫ—кайатпӑр.
    Ак хулӑн сас йанӑраҫ
    Вӑй хӑват пур—выҫӑ мар.
    Пурне ларма йыхӑраҫ,
    —Сыв пул ӗнтӗ, Шупашкар;
Епӗр ларнӑ—шӑватпӑр;
Анаталла пирӗн ҫул.
Хамӑр санах пӑхатпӑр.
Ех, Шупашкар! сывӑ пул!..
    Акӑ... ес ҫук—пытантӑн,
    Пиртен тарса йулатӑн,
    Аҫа, епӗр кайатпӑр—
    Ҫавса кӑна пыратпӑр!
Куҫӑм куҫаҫ тавраллах...
Акӑ, ҫӑваш йалӗ курӑнаҫ,
Хӗр... Лашасем... Сӑрт тухрӗ,
Хай йал йулаҫ, ҫухалаҫ.
    Йӑлтӑртатса, ҫуталса,
    Шыв хӗвелпе тусланса
    Йухса йулаҫ хумханса,
    Шӑвайманшӑн хурланса.
Унта-кунта хумпала
Пӗҫӗкҫеҫҫӗ кимӗсем,
Урлӑ-пирлӗ лӑканса
Йулса пыраҫ пирӗнтен.
    Кӗрхи вӑрман сӑрт ҫинҫе
    Шуҫҫисене выҫҫатаҫ;
    Сив ҫилпеле силленсе,
    Пуҫне тайаҫ,—ыр сунаҫ.

Акӑ кунта, пирӗн умра,
Тапаланаҫ малалла
„Пукҫир“ тенӗ йапала
Пилӗк паршӑ сӑтӑрса...

Пирӗннипе танлашаҫ,
Хире хирӗҫ ыр сунса—
Хумсемпеле ҫапӑҫса—
Пӗр самантрах ҫухалаҫ.

Сӑртсем, хӑйӑр, вӑрмансем...
Йалсем-мӗнсем пурте пур.
Ех, хӗвелӗ, пӗлӗтсем!
Ӳркенмесӗр курса пыр.

Шыв варринҫех савӑнса
Ларса курса пыратӑн.
Пурне тӑван ӑҫ-пуҫа
Етемӗнне куратӑн.

1920 ҫул, Атӑл ҫинҫе
Конференсирен таврӑннӑ ҫух.

# Мускав...

(Сыпăк).

Кăварлă ҫунсенĕн
Хастарлă, хĕлхемлĕ
Ĕҫхалăх ҫĕри—
— Мускав—тĕп хула
Кĕрлет вăл, шавлаҫ,
Ҫĕн пурнăҫ тăваҫ.

Ĕҫхалăх вăй-халĕ—
Ҫĕнетнĕ сунталĕ—
Пăлхав ĕҫ тĕрри—
Кунта вут пулса,
Тирпей шăранаҫ—
Ҫĕн тымар тапаҫ.

Вăрманлă, хирсемлĕ
Вĕт-шакă йăхсемлĕ
Совет кил-карти
Кунта, йăлт кунта
Ҫĕн тум тумланаҫ,
Ĕҫе пуҫ тайаҫ.

Кунта ҫын кунҫулĕ—
Хура тар—куҫҫулĕ...
Ĕмĕт-шухăшсем
Вута тумласа
Ҫупаҫ, тасалаҫ—
Ҫĕн тĕнҫе тăваҫ.

Кунта хаҫ ҫĕр-шывăн
Тĕрекĕ—ăспуҫĕ—
Тĕнҫе кăвапи,
Кунта—тĕп йалав,
Кунта—Ленин сасси,
Кунта—пурнăҫ—пуласси!..

Мускав, 1924 ҫул.

# Çуркуннепе.

Сив хёл иртсе çамланҫё
Ырă çуркунне куç умнҫе.
Çут çанталăк вăранҫё—
Ырлăх илет çут тёнҫе.

Ытарма май çук кунсем
Таçта йулса пыраççё,
Пулас кунçул тёррисем
Инçет йенҫен ҫупаççё.

Умри инçет щевлелле
Вăй выҫҫаса çех тăраĭ;
Çёнё тёнҫе йеннелле
Кăмăлсене сăрхтараĭ.

Ҫеҫенленен илемпе
Тухса тăран хирелле,
Уç сывлăшпа ҫӳхенсе,
Ума кӳрен ёмётне.

Лерен, çӳлтен—тӳперен—
Умна хёвел карăпаĭ;
Кăмăлланса çитнёрен
Хăйне пётём халалаĭ.

Ун çуттинҫе киленсе
Вёçен кайăк йурă йурлаĭ;
Мён пур кунçул йёрё çине
Хăй кёввине сапалаĭ.

Ун кёввипе килёшсе,
Шап шур, кăштра пёлётсем
Таçта шăваççё йеррипен.
Пит инçе тăр ёмётсем?

Елёк 1921 çул.

# Çуркунне илемĕ.

Çырма çатра пур çĕрте
Тӳрем пекех пулнăççĕ,
Йал картине ĕреçĕпех
Шур йур айне тунăççĕ.
Ак хай сивве хӳтерсе
Хĕвел иртен ир тухать;
Măйне çыхнă шарăхне
Етем çыхма пăрахать.
Савăнăçлă çуркунне
Çитсе пеçĕ пирĕн йенне,
Вăй-хăваçпе тĕнçене
Ырлăх кӳме пикенет.
Сăртсем çинçен шур йура,
Вырнĕсенçен хускатса,
Илсе кайать йухтарса
Таçти çыран-шырлана...
Акă çырма йеннелле
Йухаççĕ те шывĕсем;
Çупса анçĕç ерттелпе
Шывне курма аçисем.
Аçи-пăçи кăшкăрать,
Çыранри шыв хыт шавлать,
Мĕн пур çĕр-çун хусканать,
Пĕтĕм тĕнçе йанăрать.
Кун ăшшине сисен те,
Çупса тухан туллалла;
Çуркуннейĕн илемпе
Çуну кайать савăнса.
Йĕри тавра пăхан та—
Куçу кайать йăпанса;
Итле-итле тăран та—
Хăлху кайать йанраса!..

Пĕлĕт çумпе—картипе
Майне тăснă тăрнасем—
Вĕçсе килеç йеррипен:
—Асӑ килнĕ пăрçасем!..
Йăмралăхра курак та
Çăвар туллин кăшкăрат;
Вак тĕвекрех туратпа
Йăва тăртат—тăрăшат.
Килти йывăç пахҫинҫе
Сар кайăксем йурлаççĕ;
Хăйсен савăк сассипе
Йал пурнăçне мухтаççĕ.
Çав хушăрах тăрийĕ
Кăвак пĕлĕт хушшинҫен
Йурлат йарат сăввине—
Çуркуннешĕн ҫĕринҫен...
Еп куçăмпа курмасан та
Паллап ăна сассинҫен;
Ун сассине йуратап та,
Пĕлте пăхап тем ҫулҫен.
—Йурлăр, йурлăр йурăра,
Ҫунăм савнă кайăксем;
Ҫасрах ӳсĕр сарăлса
Хĕрлĕ тумлă ҫеҫексем.
Хуйхă кунне пĕтерсе,
Мĕн пур ҫĕр ҫуна савса,
Çĕнĕ çăвăн пуçламĕшĕ
Килҫĕ кунта карласа.

Елĕк, 1919 çул.

# Çурхи кун.

Вăшăл-вăшăл çил вĕрет,
Вăрман йенҫен вăл килет.
Хресҫен тăван уйĕнҫе
Хĕрсе ака акалаҭ.

Йĕç хушшинҫех куçĕпе
Сухаç кураҭ ыррине;
Хăйĕн çемçе ҫĕлхипе
Туртса йараҭ йурриие...

Ăна хирĕç тăрисем
Çӳлтен йурра йанратаç;
Тĕнҫе илемлĕхĕсем
Куç умĕнҫе йăванаç.

Йешерекен вăрмана
Пĕлĕт илет хупласа;
Вăл уçăлса хупăнса
Савăнтараҭ сухаçа.

Ака уйăхĕ, 1920 м. çул.

# Ирхине ирех.

Кӑвак шуҫӑм килҫӗ те,
Хирте тӑплӑх ӗнтӗ ҫук;
Тӗтре хӑйӗн аллипе
Ҫитсе тытман вырӑн ҫук.

* *
*

Ирхи уҫӑ сывлӑшпа
Ыйхӑ тарса пытанаҫ;
Курӑк ҫинҫи сывлӑмпа
Ҫеҫен ҫеҫек пит ҫӑваҫ.

* *
*

Таҫта лере, инҫетре,
Кӑштах вӑрман курӑнаҫ;
Вӑл та тӗтре ӑшӗнҫе
Мӗлке пек ҫех туйӑнаҫ.

* *
*

Ҫав мӗлкесем хыҫӗнҫеп
Пӗр вӗҫӗмсӗр пӗлӗтсем
Мӗшӗлтетсе пуҫ йӑтаҫҫӗ.
Упалепме тытӑнаҫҫӗ.

* *
*

Ав вӗсене йӗрлесе
Кун ҫути те курӑнҫӗ;
Пӗтӗм тӗнҫе пурнӑҫ те
Унпа ҫасах улшӑнҫӗ.

Елӗк, 1919 ҫ.

# Каçхине.

Хуллен хулленех
Тĕттĕмленме пусларĕ,
Çĕре пĕтĕмпех
Тĕтре çитсе хупларĕ,
Ҫеҫек, ырăскер,
Илемленме пăрахрĕ;
Тĕнҫе, ырнăскер,
Выртса канма васкарĕ.
Çăлтăрсем кăна
Ыйха кайма пăхмаççĕ;
Пĕлте сыхласа
Куçĕсене хупмаççĕ.
Тĕнҫе ыйхине
Вĕсем виçсе тăраççĕ;
Хуллен ҫӳхенсе
Пĕр пĕринпе выҫҫаççĕ.

1920 çул, Вăрнар.

## Çуллахи каç.

Пăшăлтатса ларакан
Йăвăç çулçи ăшĕнҫе
Шăпҫăк йурра пуçламан...
Тĕнҫе канаў тĕлĕрсе.

**
*

Ăна савса пур йенҫен
Ыр шăрш пырса ыталаў;
Сывлăм тухса йерипен
Курăк çумне лăпҫăнаў.

**
*

Ыйăхпа канăç çĕклесе
Ĕнтрĕк щăппăн çех çўрет;
Пурне ыйăха пиллесе,
Хăй виттипе вăл витет.

**
*

Çырма шыв те кĕрлемест,
Вăл та канаў, ҫўхенмест..,
Йывăç çинҫи шăрҫăк çеç
Кăшт ҫăрманма ўркенмест.

1920 ç.

# Утă çинҫе.

Çут тĕнҫенĕн сывлăхĕ—
Хĕвел хĕртет—пĕçертет;
Ҫĕрҫун апат ырлăхĕ
Ӳсет, пиçет, çитĕнет.

Çĕрĕ, кунĕ, сисме çук
Шăваç, тараç таçталла;
Ĕçне тума мехел çук—
Ăна курмаç пулмалла.

Çĕртме ĕнтĕ пĕтмен-ха—
Сӳрелесе хумалла...
Сӳри тата—иртмен-ха,
Çулма вăхăт—тухмалла.

Ирех тăран—астăван:
Киле васкан выртмаран;
Утна тытан—утланан,
Тусан... Йала кустаран.

Ал-урана сулласа,
Куçа-пуçа выҫҫатса,
Пыран вара... „Çул парах!..“
Кулленхинҫен хытăрах.

Вĕçнĕ пекех ҫупсан та,
Тусан ҫыхăнтарсан та
Йĕри-тавра пăхатăн—
Итле-итле пыратăн.

Унта, хура пусăра,
Ик-виç аҫа сӳрелеç;
Муклашкаллă анана
Çемçетесшĕн, вĕтетеç.

Тусан ҫăпти—çавра çил,
Çӳппи-çаппи çавăрса,
Çĕн тăпрана хускатса
Авă шăваҫ ашкăнса...

Йурă сасси.—„Савнă кил,
Есĕ мана ăшăтрăн—
Ал-урама вăй патăн,
Ĕçе тухма пултартăм.“

Хресӂеп сасси йан! кайаҫ,
Пĕтĕм уйа йанратаҫ;
Ĕç вăй-халĕ шăранаҫ,—
Савăнăç та туйтараҫ.

Ыраш пусси хушшинӂе
Уй пуçлăхĕ—путене,
Ыраш уйне мухтаса
Туртса йаӂĕ йуррине:
„Пĕт-пĕтĕм!.. Пĕт-пĕтĕм!

Йаш çын, пăх-ха уйалла,
Санăн вăйна пухмалла,
Пайан утта тухмалла,
Васкăр ĕнтĕ сывлăмла!.“

„Илттерĕп! илттерĕп!
Тахçантанпах кĕтсеттĕм—
Хресӂен, уту пит хÿхĕм.
Килех, илех çавуна,
Хирсе тăках çаранна!..
„Хресӂенсем! Хресӂенсем!

Ан шеллĕрсем хул вăйне,
Хаӂ хатĕрлĕр апатне,
Усрăр выӂăх-ӂĕрлĕхне,
Аванлатăр пурнăçне!..“

„Ир, тем те! Ир, тем те!..
Ĕç халăхĕ, ан çывăр,
Сан манмалла ыйхуна,
Тытаӂӂен çех ĕç йывăр—
Пĕр тытсассăн, вăл ăнаҫ...
„Илтетре!? Илтетре!?

Çўçў-пуçу вĕçтĕр-и!
Вăран, васка уйалла,
Вайлăрах сик, ĕç ђĕри;
Вай пар—утă çулмалла!..“

Илемлĕрен илемлĕ
Шереметĕн сăввисем,
Никам выртма тўсеймĕ,
Килленђĕççĕ хăлхасем.

Вĕçе вĕçех ывтăнђĕç
Улăх тăрăх хресђенсем;
Вăшлатма та тытăнђĕç—
Аллисенђи çависем.

Киле çитен—çывăнан,
Апатна кăшт хыпкалан—
Çава илен—утланан,
Каллех уйа уттаран.

Улăх тулли—вĕçĕмсĕр
Ут çулакан йăшăлтатаў,
Вĕсен кăвак шуçăмлах
Шур тумĕсем йалкăшаў.

Хĕрсен кĕлетки çурăмĕ
Шур хурăнăн туйăнаў;
Хулне сулса йанăçем,
Вăл йарăнаў—сулланаў.
Ирхи çилĕ пĕт-пĕтĕм
Ађашланаў уй-хирте,
Кăштах кăш-кăш вĕркелет—
Çава сасси кĕввипе...

Ех, пит аван туйăнаў!
Ак унђђен те пулмарĕ—
Пурне темĕн хупларĕ:
„Хаçан-хаçан!“ тутараў.

„Хăйăр муҫи“ пуҫ йăтнă,
Сура-сурах йатлаҫаҫ,
Хайаррăнах кăшкăрса
„Хурçă каҫҫа“ ĕç хушаҫ.

„Хурçă каҫҫи“вăй пухаҫ,
Шăхăрттарма тытăнаҫ,
Курăк ăшне вăл ҫăмаҫ,
Калле-малле кускалаҫ.

Ҫапла ĕптĕ хресҫенсем
Улăхра ут ҫулаççĕ,
Ҫависенĕн сассисем
Мусăк кĕвви калаççĕ.

Есĕ те ҫиçсе ҫитетĕн
Кăкаратăн лашуна;
Ҫĕн ҫавуна илетĕн—
Тытăнатăн ут ҫулма.

Сулса йаран ҫавана
Аври ҫине уртăнса.
Ҫави касаҫ—вăшлатаҫ—
Курăк ҫунне кăлараҫ.

Ҫупса йаран мăкалсан
Лапаткана йанратса,
Сăрнай кĕвви хăлхунта,
Йунĕ вĕри аллунта!..

**

„Кăнтăр çитет,
Вăхăт кĕтмест.
Хĕвел хĕртет пĕлĕтрен;
Курăк типет—
Çава илмест,
Киле вĕçĕр сывлăмҫҫен!“
Тăри вĕçет,
Сăвă пĕлет:
Çакна йурлаӗ тӳпере.
Хăй кĕçенет,
Сасси килет—
Пĕлме çук хăй ăçтине!
Халăх утаӗ,
Киле шăваӗ.
Тăрса йулан тăрпĕҫҫен.
Çави выртаӗ,
Вăл та канаӗ
Каçҫен—алла кĕриҫҫен.
Курăк аван,
Ăна куран—
Унта утна кăкаран.
Сăрт иҫçе мар,
Унта утан—
Пыран... Выртса çывăран.
Шăна, пăван...
Çӳлтен кайăк
Йапратаççĕ хăлхана.
Тĕлĕк... Çулла,
Хĕрсем... Уйав...
Йурлаç, кулаç ăрамра!..
1920 çул, Ураскилт.

# Хӗллехи илем.

(Ут йуртти*)

Пылҕӑк, тумхахлӑ
Кӗр кунӗ иртрӗ;
Сивӗ хӗлӗ сисрӗ—
Вӗҫрӗ те килҕӗ.
Ҫут-ҫанталӑкӑн
Хӗр шуҕӗ килҕӗ;
Шурӑ тумне илҕӗ—
Хӑй пӳне витрӗ.
Шап-шурӑ йурӗ
Кунӗн те ҫӗрӗн
Вӗлтӗрти вӗлтӗр—
Вӗлтӗртетрӗ.
Аркӑллӑ, анлӑ
Тарӑн варӑн—
Тин текех ҫук ӗнтӗ
Ыр ҫӑл куҫӗ.
Сулӑнлӑ-и, ҫул ҫук-и?
Алӑ сулатӑн—
Савӑнӑҫ, канӑҫ
Сасӑ паҕӗҫ.
Ҕуннӑмҫӑм уҫҫӑн—
Ҫулшӑн пулҕӗ,
Ут кӳлтӗм—лартӑм
Ыйӑха мантӑм,
— Сывӑ пул, йалӑм!..
Шӑхӑрайрӑм;
Лӑстӑрти-лӑстӑр
Йурттарайрӑм.

---

*) Лаша хулленрех ҕуппӑ ҫемӗпе.

Капăрҫаккăн капăр
Уйăх тухрĕ,
Йăлтăрт та йăлтăрт
Пăнҫă*) тăкрĕ.
Унăн та кунăн
Куҫăм куҫрĕ,
Пурăнăҫ тумĕ—
Умăм пулҫĕ.
— Ҫĕрĕл ĕнт, ĕмĕт,
Пĕт ес, хĕсмĕт**)
Авăкран авăк
Йурă пуҫларăм
— Сассăмҫăм, сарăл!
Хуйăх-суйăх катăл
Айта-а!.. Е-ей!
Вĕҫ—вĕҫей!..
Шап шурă тумлă
Уйĕ йулҫĕ;
Мăнă вăрманĕ
Шурĕ те тухрĕ.
Сивĕрех ҫилĕ
Ҫиллентерҫĕ,
Ик-виҫĕ ҫĕрлĕ
Силлентерҫĕ.
Сĕм те вăрманҫăм,
Ыйăх паманшăн,
Хăшкăлти-хашкăл
Хăшкăлтатрĕ.
Шăнкăлă-шанкăл
Хăрăк-марăк
Ҫеммĕме майлă
Шăнкăлтатрĕ.

---

*) Точка.
**) Хĕсмĕт—тăвăрлăх, пусмăр хĕсни.

Лăҫăрти-лаҫăр
Сулăнк пуҫланҫĕ,
Йуррăмри сассăм
Йанкăсланҫĕ...
— Вĕҫ ĕнтĕ! Вĕҫ ес,
Утăм, вĕ-ĕҫ.
Тинкĕли-тенкĕли
Ей—та-а!.. Е—ей!..

Ураскилт, 1922 ҫул.

# ТУМПАЛЛИ


Стр

1. Сăвăç . . . . . . . 3
2. Ђăваш ађине . . . . . . . 5
3. Таван сăвва . . . . . . . 6
4. Шкул ађисен пурнаçĕ . . . . . . . 7
5. Тимĕрç лаççинђе . . . . . . . 10
6. Ĕç ĕмĕте . . . . . . . 11
7. Епĕ . . . . . . . 13
8. Савнипе . . . . . . . 14
9. Тусам, ап йĕр . . . . . . . 16
10. Шăхранпала Шупашкар . . . . . . . 17
11. Çĕнĕ хумсем . . . . . . . 21
12. Тинĕсе . . . . . . . 22
13. Атăл çинђе . . . . . . . 23
14. Мускав . . . . . . . 25
15. Çуркуннепе . . . . . . . 26
16. Çуркунне илемĕ . . . . . . . 27
17. Çурхи кун . . . . . . . 29
18. Ирхине ирех . . . . . . . 30
19. Каçхине . . . . . . . 31
20. Çуллахи каç . . . . . . . 32
21. Утă çинђе . . . . . . . 32
22. Хĕллехи илем . . . . . . . 38

ХАКĔ 35 ПУС.